РФ Пенси фондĕнчен пĕлтереççĕ

Пенси виçи мĕн чухлĕ пулĕ?

Çулсем иртнĕ май пулас пенси виçи мĕн чухлĕ пуласси чылайăшне шухăшлаттарать те, канăççăрлантарать те. Уйрăмах çак сăмахсене ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕçлекенсем тĕлĕшпе каламалла. Вăрттăнлăх мар, предприятисенчен чылайăшĕ Пенси фондне страховани взносĕсене вăхăтра тата тулли виçепе тӳлесе тăраймасть. Апла пулсан çакă вăл пенсие тухаканăн пенси виçи мĕн чухлĕ пулассипе тӳрременех çыхăннă. Çавна май паян хамăр калаçăва эпир РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхне Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВАНА чĕнтĕмĕр, хаçат вулаканăн И. ИВАНОВАН ыйтăвĕсем çине хуравлама ыйтрăмăр.

– Хальхи вăхăтра ял хуçалăх продукцине туса илекен предприятисем страховани взносĕсене ĕç укçи фончĕн 10,3 проценчĕ чухлĕ тӳлеççĕ. Ытти предприятисем – 26 процент. Апла пулсан çакă ял çыннисен прависене «хĕстерни» пулать, вĕсен пенси виçи пĕчĕкрех пуласси паллă.

– Çавна каласа хăварасшăн. Тĕрĕсех, ĕç пенсийĕн страхланă пайĕн виçи мĕн чухлĕ пуласси Пенси фондне страховани взносĕ мĕн чухлĕ куçарнинчен килет. Паянхи куна ĕç паракан страхователсен страховани взносĕн тарифĕ страховани взносĕсем хывмалли базăн 14 проценчĕпе, ял хуçалăх продукцине туса илекенсен – 10,3 процентпа танлашать.

2009 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 212-ФЗ номерлĕ «О страховых взносах в Пенсионный фонд Российской Федерации, Фонд социального страхования РФ, Федеральный фонд обязательного медицинского страхования и территориальные фонды обязательного медицинского страхования» тата 2009 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 213-ФЗ номерлĕ «О внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации и признании утратившими силу отдельных законодательных актов (положений законодательных актов) Российской Федерации в связи с принятием Федерального закона «О страховых взносах в Пенсионный фонд Российской Федерации, Фонд социального страхования РФ, Федеральный фонд обязательного медицинского страхования и территориальные фонды обязательного медицинского страхования» Федераллă саккунсемпе килĕшӳллĕн пĕрлехи социаллă налука пăрахăçлаççĕ. Ун вырăнне бюджетпа çыхăнман патшалăх фончĕсене страховани взносĕсем куçарма тытăнма тивет: Пенси фондне, Медицина страхованийĕн фондне, Социаллă страховани фондне.

2010 çулта РФ Пенси фондне страховани взносĕ тӳлекенсен тариф 20 процентпа танлашĕ, пĕрлехи ял хуçалăх налукĕ тӳлекен ял хуçалăх предприятийĕсен – 10,3 процентпа. 2011 çултан тытăнса Пенси фондне хывакан страховани взносĕсен ставки 26 процент таран ӳсмелле. Ял хуçалăх продукцине туса илекен предприятисенне ăна тапхăр-тапхăр ӳстерсе пырĕç: 2011–2012 çулсенче вăл 16 процента çитĕ, 2013–2014 çулсенче – 21 процента, 2015 çултан тытăнса – 26 процента.

РФ Пенси фондне хывакан страховани взносĕсен тарифĕсем пĕчĕк пулнине федераллă бюджетран бюджетсем хушшинчи трансфертсем шучĕпе саплаштараççĕ.

– Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем страховани взносĕсене йĕркеллех тӳлесе тăраççĕ-и-ха?

– Ку енĕпе пĕтĕмпех йĕркеллĕ теме çук. Ял хуçалăх предприятийĕсенчен нумайăшĕ Пенси фондне страховани взносĕсем куçарса парассипе 100 пин тенкĕ ытла парăмра. Вăл шутра Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăх (124 çын), Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх (148 çын), Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх (156 çын), «Свобода» хуçалăх (235 çын), «Герой» хуçалăх (166 çын), «Восток» хуçалăх (97 çын). Управлени çав парăмсене шыраса илессипе çине тăрса ĕçлет. Налук тӳлекенсене ĕç комиссийĕсен ларăвĕсене чĕнетпĕр. 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта ял хуçалăх продукцине туса илекен предприятисем тĕлĕшпе страховани взносĕсем тӳлесе татассипе 59 требовани пĕтĕмпе 2 миллион та 740,8 пин тенкĕлĕх тăратнă.

В налоговой инспекции

Новые правила для ООО

С 1 июля 2009 года Федеральный закон от 8 февраля 1998 года № 14-ФЗ «Об обществах с ограниченной ответственностью» действует в редакции Федерального закона от 30 декабря 2008 года № 312-ФЗ «О внесении изменений в часть первую Гражданского кодекса Российской Федерации и отдельные законодательные акты Российской Федерации» (далее – Закон № 312-ФЗ). Изменения, внесенные названными нормативными документами, коснулись не только порядка создания и управления Обществ с ограниченной ответственностью (ООО), но и существенно затронули имущественные отношения между участниками общества. Кроме того, 22 июля 2009 г. был официально опубликован Федеральный закон от 19.07.2009 N 205-ФЗ «О внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» (далее - Федеральный закон от 19.07.2009), которым также были внесены некоторые изменения в положения Закона об ООО.

Основным нововведением является исключение учредительного договора из состава учредительных документов. Так, согласно ст. 89 Гражданского Кодекса Российской Федерации единственным учредительным документом общества является устав. Отношения между учредителями по поводу совместной деятельности по учреждению общества, определения размера уставного капитала общества, размера и номинальной стоимости доли каждого из учредителей общества, размера и порядка оплаты таких долей в уставном капитале общества будут закрепляться в договоре об учреждении общества. Названный договор не относится к числу учредительных, но заключение его является обязательным при учреждении общества. Помимо указанного договора, при учреждении общества в решении об учреждении общества необходимо также отразить результаты голосования учредителей общества и принятые им решения по вопросам учреждения общества, утверждения устава общества, избрания или назначения органов управления общества.

Небольшие изменения внесены в положения о содержании устава ООО. Так, теперь в уставе могут не указываться сведения о размере и номинальной стоимости доли каждого участника общества. Ранее при изменении размера долей участников общества ООО было обязано вносить данные изменения в устав и учредительный договор, а соответственно, в Единый государственный реестр юридических лиц (далее – ЕГРЮЛ), теперь же этого не потребуется, если устав общества не содержит соответствующих сведений.

Наиболее существенные изменения коснулись порядка перехода доли или части доли участника общества в уставном капитале общества к другим участникам общества и третьим лицам. Сделка, направленная на отчуждение доли или части доли в уставном капитале общества, будет подлежать нотариальному удостоверению.

На нотариуса, совершившего нотариальное удостоверение сделки по отчуждению доли, возлагается обязанность в течение трех дней со дня удостоверения такой сделки передать в орган, осуществляющий государственную регистрацию юридических лиц, заявление о внесении изменений в ЕГРЮЛ с приложением соответствующего договора, а самому обществу передать копию заявления и документы, подтверждающие переход доли. Данное правило введено с целью защиты прав и законных интересов новых участников ООО. Нововведения касаются момента перехода доли в уставном капитале. Приобретатель доли осуществляет права и несет обязанности участника общества с момента нотариального удостоверения сделки, направленной на отчуждение доли или части доли в уставном капитале общества либо в случаях, не требующих нотариального удостоверения, с момента внесения в ЕГРЮЛ соответствующих изменений на основании правоустанавливающих документов.

Сведения о долях участников будут отражаться не в учредительных документах общества, а в списке участников общества, ведение которого осуществляется либо исполнительным органом, либо иным установленным уставом органом. Ведение списка участников общества обеспечит своевременное и достоверное отражение сведений об участниках общества, не откладывая этот момент до созыва общего собрания участников и государственной регистрации изменений в учредительные документы общества. Важными являются положения Закона № 312-ФЗ, касающиеся управления в обществе. Высшим органом управления, как и прежде, признается общее собрание. Если уставом общества предусмотрено образование совета директоров (наблюдательного совета), то названный орган определяет основные направления деятельности общества.

В новой редакции Закона № 14-ФЗ размер уставного капитала установлен в твердой денежной сумме -10000 рублей (раньше было в МРОТ).

С 1 июля 2009 года выход участников общества из общества, в результате которого в обществе не остается ни одного участника, а также выход единственного участника общества из общества не допускается.

Уставы обществ, созданных до 1 июля 2009 года, подлежат приведению в соответствие с частью первой Гражданского кодекса Российской Федерации не позднее 1 января 2010 года.

Для государственной регистрации внесенных изменений обществам необходимо представить в налоговый орган по месту регистрации заявление по форме № Р13001 (Заявление о государственной регистрации изменений, вносимых в учредительные документы юридического лица). До утверждения новой редакции форм заявлений для государственной регистрации юридических лиц Общества с ограниченной ответственностью применяют рекомендуемые формы, которые размещены на сайте ФНС России www.nalog.ru.

Е.И. АРСЕНТЬЕВА,
начальник отдела работы с налогоплательщиками, их регистрации и учета МИ ФНС России № 6 по Чувашской Республике.

Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

Юрă-ташă та вырăнлă

Çĕр ĕçченĕн питĕ ответлă ĕç тапхăрĕ пырать. Хирсенчи тыр-пула кĕлетсене кĕртессипе тимлеççĕ вĕсем. Ĕç вăхăтĕнче вара усăллă канни те кирлĕ. Çавăнпах ĕнтĕ районти пур библиотека ертӳçисене те йĕтем çинче ĕçлекенсене информацип тивĕçтерсе тăма сĕннĕ.

Ку ĕçе ăçта мĕнле йĕркеленине тата ял тăрăхĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсем йĕтемсем çинче концертсемпе пулнине тĕрĕслесе тăраççĕ. Сăмахран, «Герой» хуçалăхри йĕтем çинче информаци стенчĕ те, кану пӳлĕмĕнче хаçат-журнал та пур. Августăн 11-мĕшĕнче вара кунта культура ĕçченĕсем концертпа пулнă. Çапла йĕркелесе пымалла та ĕçе – пĕрпĕринпе çыхăнса.

Районти ытти хуçалăхсенче те – Ильич яч. хис., Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., «Оринино», «Восток», «Свобода», Суворов яч. хис. – пулчĕ тĕрĕслев ушкăнĕ. Лару-тăру ялăх темелле мар. Пуртте тăрăшаççĕ. Акă «Ударник» хуçалăхăн тăватă уйрăмĕнче тата çĕр улми лабораторийĕнче ĕçлекенсене Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕ юрă-ташăпа савăнтарнă та ĕнтĕ.

Районти культура пайĕн информацип художество пултарулăх ушкăнĕ тата Муркашри Культура çуртĕнче ĕçлекенсем районти хуçалăхсене çитеççĕ. Вырмара малта пыракан комбайнерсене саламласси те çирĕп йĕркепе пулса пырать.

Е. АКСЕНДАРОВА,
культура пайĕн методисчĕ.

Вĕренӳ çулĕ çывхарать

Ачасене хушма пĕлӳ парас тесен

Районта пурĕ хушма пĕлӳ паракан 4 учреждени – ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕ, çамрăк техниксен станцийĕ, районти ача-пăча пултарулăх çурчĕ тата искусство шкулĕ ĕçлет.

Искусство шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕпе районти мероприятисенче тăтăшах савăнтараççĕ. Кунта вĕренме килнĕ ачасем хăйсен ăсталăхне туптаса çӳллĕрех шая çĕкленеççĕ. Преподавательсем пултаруллă, хастар. Вĕрентӳ пӳлĕмĕсенче те ĕçлеме кирли пĕтĕмпех пур.

Искусство шкулне вĕренме кĕрес текенсем яланах йышлă. Августăн 28-мĕшĕнче вара кунта музыка, хореографи, художество тата пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмĕсене вĕренме кĕме экзаменсем пуçланаççĕ. Унччен маларах икĕ кун – августăн 26-27 мĕшĕсенче – тӳлевсĕр хатĕрленӳ курсĕсем ĕçлĕç. Сентябрĕн 4-мĕшĕнче вара хушма экзаменсем те пулмалла.

Чи пултаруллисене, малалла шанчăк паракансене искусство шкулне чĕнетпĕр. Ачасен ăсталăхне пĕрле аталантарар.

Г. АНИСОВА,
искусство шкулĕн директорĕ.

Çартан тавраннисене пĕлме

Çĕршыва хӳтĕлесси – чыслă професси

Хальхи вăхăтра çартан тавраннă хыççăн нумай яш хăйне килĕшекен яланлăх ĕç вырăнĕ тупма пултараймасть, Раççейăн нумай регионĕсене вăхăтлăх ĕççене тухса çӳрет. Вĕсем хушшинче вара çар комиссариатне çар тивĕçне малалла та пурнăçлас тĕллевпе пыракансем те çук мар. Анчах та контракт мелĕпе çар службине илнĕ чухне, призывниксемпе танлаштарсан, требованисем çирĕпрех.

Чăваш Республикин çар комиссарĕн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕ контрактниксене Рязаньти Вĕрентӳ центрне вĕренме ярать. Унта сержант должноçĕпе службăра тăма специалистсем хатĕрлеççĕ.

Контрактпа çар службине каяс текенсен сывлăх йĕркеллĕ пулмалла, судпа айăплани пулмалла мар. Çавăн пекех вĕсене профессипе психологи тĕлĕшпе тĕрĕслеççĕ. Яшсем призывпа о контрактпа РФ Хĕç-пăшаллă вăйĕсен ретĕнче пулни кирлĕ, вĕсем 35 çултан аслă пулмалла мар.

Чи малтанах контрактпа çар службине Приволжско-Уральск çар округĕн территорийĕнче вырнаçнă çар чаçĕсене ăсатаççĕ:

15 ОМСБР, 385 АБР, 23 ОМСБР, 28 ОМСБР, 7 ТП, 473 ОУЦ. Сывлăш-десант çарĕсене те кайма май пур: 76 ДШД, 31 ОВДБР, 98 ДШД, 7 ДШД. Кунпа пĕрлех контрактниксен службăна Раççей Шалти ĕçсен министерствин, Тинĕс-çар флочĕн чаçĕсенче те тăсма май пур.

Кăçал августăн 1-мĕшĕ тĕлне контрактпа çар службине кайма ыйтса çар комиссариатне запасрисем 95 граждан килчĕç. Вĕсенчен 20 çынна суйласа илсе çар чаçĕсене службăна ăсатнă. Вăл шутран 10 çынна – Приволжско-Уральск çар округĕн территорийĕнче вырнаçнă çар чаçĕсене. Ытти 75 гражданинăн ыйтăвĕсене тивĕçтереймерĕмĕр. Сăлтавĕсем вара çаксем:

– судпа айăпланнисем – 20 процент;
– профессипе психологи тĕрĕслевĕ витĕр тухайман – 34 процент;
– пĕлӳ шайĕ пĕчĕк – 10 процент;
– мораль тата нравственноç пахалăхĕн шайĕ пĕчĕк – 16 процент;
– çемье ыйтăвĕсене пула шухăшĕсене улăштарнă – 10 процент;
– чаçре тĕрĕслев вăхăтне чăтайман – 10 процент.

2009 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕччен çар комиссариачĕ Рязаньти Вĕрентӳ центрĕнче вĕренме 19–35 çулсенчи яшсенчен кандидатсем суйласа илессипе пысăк тимлĕх уйăрĕ. Кунта 2 çул та 10 уйăх вĕренмелле. Программа вăтам професси вĕренĕвĕн шайĕпе танлашать.

Кандидатсем вĕренме кĕнĕ чухне тулли вăтам пĕлӳ программипе вырăс чĕлхипе, математикăпа, физикăпа тата ӳт-пӳ çирĕплĕхĕ енĕпе экзаменсем тытаççĕ. Вĕреннĕ вăхăтра уйăхне 15 пин тенкĕ тӳлесе тăраççĕ. Уйрăмах аван вĕренекенсене татах 5 пин тенкĕ хушса тӳлеççĕ.

Вĕренсе тухнă хыççăн çар çыннисен уйăхри шалăвĕ 35–40 пин тенкĕпе танлашать. Выпускниксене Приволжско-Уральск çар округĕн территорийĕнче вырнаçнă çар чаçĕсене службăна яраççĕ.

Вĕренме кĕнĕ кандидатсемпе вĕреннĕ тапхăр тата 5 çуллăх служба вăхăчĕ валли, пĕтĕмпе 7 çул та 10 уйăхлăх контракт тăваççĕ. Вĕреннĕ вăхăтра казарма типлă общежитире пурăнмалла.

Хăвăра интереслентерекен ыйтусемпе тулли информаци Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн 1-мĕш уйрăмĕн пуçлăхĕ Анатолий Геннадьевич Ефимов патĕнче илме пултаратăр. Телефонĕсем: (8-835-41) 62-189, 62-350.

В. АНДРЕЕВ,
Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракане.